# «Республикăри вулавăшсене тĕрлĕ енлĕн пулăшатпăр»

***Вĕреннĕ çамрăксем 1870 çул вĕçĕнче Шупашкарта пухăннă та хулара библиотека уçасси пирки калаçнă. Сăмаха çилпе вĕçтермен – çав çулхи раштав уйăхĕнчех Хусан кĕпĕрнаттăрĕ патне çыру янă. Кĕпĕрне пуçлăхĕшĕн ку ыйту кĕтменлĕх пулман, мĕншĕн тесен унашкал вулавăшсем Хусанта та, Раççейĕн ытти хулинче те уçăлнă. Кĕпĕрнаттăр ирĕк парсан 1871 çулхи кăрлачăн 12(24)-мĕшĕнче учредительсен пухăвĕ иртнĕ. Унтанпа 150 çул хыçа юлнă. Чăваш наци библиотекишĕн ку çул – юбилейлă. Ун пирки вулавăш директорĕпе Роза Лизаковăпа калаçрăмăр.***



– Хусансемпе танлаштарсан, Шупашкарти библиотекăна уçма нимех те пулман. Пысăк хуласенчи вулавăшсене хута яма паллă пĕр-пĕр общество ĕçченĕ пуçтарнă кĕнекесем май панă. Сăмахран, 1865 çулта Хусанта уçăлни Иван Второвăн килти вулавăшĕнчен аталанма пуçланă. Пирĕн вара, каларăм ĕнтĕ, кĕнекесен пуххисем пулман. Çапах темиçе хастар пĕр шухăшлă пулса 80 ытла кĕнеке илсе пынă-ха. Çапла майпа кĕпĕрнери 12 уес хулинчен Шупашкарта вулавăш чи малтан уçăлнă. Вăл темиçе çул мал ĕмĕтлĕ çынсем пулăшнипе тата вулакансен абонент тӳлевне пула кăна тытăнса тăнă. Пӳлĕмсене те çине-çинех улăштарма тивнĕ. Учредительсем, вĕсем 17-ĕн пулнă, библиотекăра черетпе хурал тăнă, вулакансене кĕнекесемпе тивĕçтернĕ. Вĕсем кĕнекесене ял тата хула шкулĕсенчи учительсене тӳлевсĕрех панă. Унтан та ытларах – литературăна ятарлă сумкăна чиксе вулакансем патне çитерсе тăнă.

**– Вулавăшăн малтанхи хастарĕсенчен хăшне уйрăмах палăртнă пулăттăр?**

– Чылайăшне вĕсем. Сăмахран, Михаил Федоров, Хусанти учительсен семинарийĕ çумĕнчи шкултан вĕренсе тухнăскер, 1879-1891 çулсенче Шупашкар хула училищинче вĕрентнĕ. Эпир ăна «Арçури» поэма авторĕ пек лайăх пĕлетпĕр. Ял ачисен йышĕнче уйрăмах пултаруллисене асăрхасан хула шкулне илсе пынă. Ентешĕмĕр, хула вулавăшĕн правленийĕн членĕ пулнăскер, вырăнти халăха çутта кăларас ĕçе пысăк тӳпе хывнă. Семен Вишневский пирки те çавнах каламалла. Вăл Хусанти тĕн семинарийĕнче тата унти университетăн медицина факультетĕнче пĕлӳ илнĕ. 1883-1904 çулсенче Шупашкарта уес тухтăрĕнче ĕçленĕ. Семен Матвеевич медицина кĕнекисене чăвашла куçаракансенчен пĕри пулнипе те палăрса юлнă. Çав вăхăтрах хула библиотекине аталанма пулăшнă, унăн правленийĕн йышĕнче тăнă тата виçĕ çул ытла библиотекарь тивĕçĕсене пурнăçланă. Каярахпа, Хусана ĕçлеме куçсан, Семен Вишневский чăвашсен пĕрремĕш хаçачĕпе «Хыпарпа» çыхăну тытнă.

**– «Лайăх кĕнеке çăлтăртан та çутăрах ялкăшать», – тенĕ пирĕн несĕлсем. Паян эсир ертсе пыракан библиотекăна аталантарма, кĕнекесене «çăлтăртан та çутăрах ялкăштарма» пур условисем те пур.**

– Çурта юсанă тата тăватă хутлă тепĕр çурт хăпартнă хыççăн вулав залĕсем, курав тата конференц-залсем уçăлчĕç. Тĕп ĕçсене автоматизациленĕ. Паян фондра 2 миллион документ упранать. Уйрăмах пĕлтерĕшлĕ тата сайра тĕл пулакан кăларăмсен шучĕ 15 пин экземпляр ытла. Вĕсенчен чи авалхи – 1643 çулта кун çути курнăскер.

**– «Кадрсем пĕтĕм ыйтăва татса параççĕ», – тени сирĕн ĕçченсем пирки те-и?**

– Библиотекăра паян 120 çын вăй хурать, вĕсен 95 проценчĕ – аслă пĕлӳллĕ. Чылайăшĕн Раççей тата республика шайĕнчи пысăк наградăсем, сумлă ятсем пур.

**– Вулавăша çĕнĕ кĕнекесемпе пуянлатма май килет-и?**

– Фондра çулленех 10-11 пин экземпляр хушăнать. 200 ытла хаçат-журнал çырăнса илетпĕр. Паллах, çак ĕçе пурнăçлама бюджетран уйăракан укçа çитмест, çавăнпа тĕрлĕ организаци-учреждение, ыр кăмăллăх фончĕсене тата уйрăм çынсене явăçтарма тăрăшатпăр, майсем шыратпăр. Пире Раççей гуманитари ăслăлăхĕсен фончĕ темиçе çул ĕнтĕ кĕнекесемпе, журналсемпе тивĕçтерет. Парне тăвакансен йышĕнче Раççейри, çавăн пекех республикăри издательсемпе авторсем тата вулакансем пур.

**– 150 çул хушшинче вулавăш тĕрлĕ йывăрлăха тӳссе ирттерни вăрттăнлăх мар. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче уйрăмах йывăр килнĕ-тĕр.**

– Чи малтанах, кадрсем çитменнипе нушаланнă. 1943 çул тĕлне унта пурĕ те 10 çын кăна ĕçленĕ, вĕсем те – сусăрсем. Професси тивĕçĕсене пурнăçланипе танах вĕсен вутă хатĕрлеме, кăмака хутса ăшăтма, пултарулăх коллективĕсен ĕçне хутшăнма тивнĕ. Апла пулин те 1943 çултанпа хаçат-журналта пичетленнĕ статьясене библиографи тĕлĕшĕнчен «Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи», «Персонали», «Илемлĕ тата обществăпа политика литературин рецензийĕ» пайсене уйăрма мехел çитернĕ. Вулав залĕ 9 сехетрен пуçласа 22 сехетчен ĕçленĕ. Вулавăшăн çавăн пекех куçса çӳрекен пунктсем те пулнă. Çапла майпа табак фабрикинче, «Тĕрĕ» артельте ĕçлекенсене, Атăл леш енчи кану çуртĕнче канакансене, 6 эвакогоспитальте сипленекенсене тата 12 çар чаçĕнчи салтаксене кĕнекесем парса тăнă. 1941-1945 çулсенче вулакансене çуллен вăтамран 125-135 пин кĕнекепе тивĕçтернĕ.

**– Наци библиотекинче культурăпа кану пурнăçĕ вĕресе тăрать. Кăсăклă акцисем, мероприятисем ирттеретĕр, проектсене пурнăça кĕртетĕр.**

– Чăнах, питĕ нумай мероприяти йĕркелетпĕр. Кашнин – хăйĕн аудиторийĕ. Сăмахран, «Библиокаç» çултан-çул вăй илсе пырать, «Кĕмĕл ĕмĕр» галерейăра ӳнер куравĕсем, пултарулăх фестивалĕсем иртеççĕ, паллă çынсем тĕлпулусене пухăнаççĕ. Çак ĕç вулакансене библиотека хăнисемпе хутшăнма, пĕр-пĕрин шухăшĕпе, кăмăл-туйăмĕпе паллашма, тепĕр майлă каласан, республикăн нумай енлĕ культура пурнăçĕпе çывăхланма май параççĕ. Иртнĕ çул онлайн майпа йĕркеленĕ мероприяти питĕ йышлă пулчĕ. Вĕсем Аслă Çĕнтерӳ пулнăранпа – 75 çул, Чăваш автономи облаçне йĕркеленĕренпе пĕр ĕмĕр çитнипе тата ытти пулăмпа çыхăннă. Çĕршывăн нумай нациллĕ поэзийĕн Пĕтĕм Раççейри «Атăл çинчи асамат кĕперĕ» виççĕмĕш фестивалĕ уйрăмах кăмăллă иртрĕ. Пандемие пула ăна та онлайн майпа йĕркелеме тиврĕ.

**– Библиотекăра хальхи вăхăтра, иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсемпе танлаштарсан, çамрăк сахалрах пек. Йăнăшмастăп-и?**

– Тĕрĕсех. Вĕсем, тĕпрен илсен, хăйсен вузĕсенчи вулавăшсене çӳреççĕ. Рособрнадзор вузсен библиотекисен ĕç-хĕлĕнче йĕрке тунă хыççăн вĕсен те вĕрентӳ литератури çителĕклех пек туйăнать. Çав вăхăтрах студентсем килте е аудиторире ларнă вăхăтрах пирĕн электрон çăл куçсемпе усă кураççĕ. Сăмахран, 2020 çулта Наци библиотекин электрон библиотекине 42 пин çын кĕнĕ, электрон каталога – 37 пин çын, вулавăшăн сайчĕпе 429 пин çын усă курнă.

**– Библиотека тата интернет… Социаллă сетьсенчи ушкăнсене мĕнле аталантаратăр?**

– Пирĕн хамăрăн веб-сайт, электрон каталог, электрон библиотека пур. Библиотекăн соцсетьсенчи страницисемпе ушкăнĕсене 17200 çын тĕрлĕ ыйтупа кĕрет: пĕрисене вулавăш ĕçĕ-хĕлĕ кăсăклантарать, теприсене – унта иртекен мероприятисем.

**– Наци библиотеки «Культура» наци проектне пурнăçа кĕртме хутшăннă май мĕнле ĕçсем пурнăçлать?**

– Асăннă проектпа килĕшӳллĕн республикăра тĕслĕх вулавăшсем уçасси вăй илсех пырать. 2019-2021 çулсенче ку енĕпе конкурса 26 заявка тăратнăччĕ, вĕсенчен 6-шĕ çĕнтерчĕ, çавăнпа паянхи пурнăç ыйтакан учреждениесем хута кайрĕç е вĕсене тăвас енĕпе халĕ вăй хуратпăр. Çитес çул валли тата 6 документ тăратнă. Наци библиотеки проект офисĕ пулнă май республикăри вулавăшсене тĕрлĕ енлĕн – конкурса хутшăнмалли документсене хатĕрлессинчен пуçласа çĕнĕ библиотека уçăличченхи пĕтĕм ĕçе йĕркелесе пырасси таранах – пулăшать.

**– Кăçалхи мероприятисем, тĕпрен илсен, библиотека уçăлнăранпа 150 çул çитнипе çыхăннă пулĕ?**

– Юбилей пулăмĕсен марафонĕ кăрлач уйăхĕнче библиотекăн кун-çулне уçса паракан куравран пуçланчĕ. «150 çул ăслăлăх тата çут ĕç службинче» экспозицин кашни пайĕ вулавăшăн пурнăçне çутатса пачĕ. Икĕ уйăх ытла ĕçленĕскере пин-пин çын килсе курчĕ. 1871 çулта Иван Яковлев чăваш пурнăçĕнче тепĕр пулăмпа – çĕнĕ алфавит йĕркелесе – йĕр хăварнă. Çакна та хамăрăн ĕçсемпе палăртмасăр хăвараймарăмăр, ăна халалласа тепĕр курав уçрăмăр. Кăçал тата Иван Яковлев тăван чăваш халăхĕ валли Халал çырнăранпа пĕр ĕмĕр çитет. Çак пулăма халалласа Халалăн пĕчĕк кĕнекине, вăл ал лаппине вырнаçĕ, кăларăпăр.

**– Мероприятисем йĕркелеме, кĕнекесем кăларма нухрачĕ те кирлĕ-çке…**

– Ку енĕпе ЧР Культура министерствине тав тумалла. Кăçал библиотека ĕçĕсене пурнăçлама, уяв мероприятийĕсене йĕркелесе ирттерме республика бюджетĕнчен самай пысăк укçа пачĕç. Федерацин Национальноçсен ĕçĕсен агентстви те пулăшрĕ. Çавăнпа палăртнă ĕçсене пурнăça кĕртме пултартăмăр. Ака уйăхĕнче йăхташсем пурăнакан регионсенчи чăваш библиотекарĕсене пуçтарса вĕсен çивĕч ыйтăвĕсене сӳтсе яврăмăр. 60 çын хутшăнчĕ унта. Çывăх вăхăтрах икĕ монографи, Тихон Сергеевăн «Храм мой – библиотека» кĕнекине хушса-тӳрлетсе – иккĕмĕш хут, Ирина Балковăн «История библиотечного дела Чувашской Республики второй половины 20-го века и начала 21 века», кăларăпăр.

**– Наци библиотекин тĕп мероприятийĕсем çитес вăхăтрах иртмелле мар-и-ха?**

– Çĕртмен 21-мĕшĕнче Çамрăксен театрĕнче савăнăçлă концерт пулĕ. Ăна Чăваш патшалăх филармонийĕ пулăшнипе йĕркелетпĕр. Тепĕр кунхине библиотекăра ĕçлекенсем валли çĕршыв шайĕнчи форум ĕçлĕ. Раççей наци библиотекин, Раççей патшалăх библиотекин, регионсенчи пысăк вулавăшсен специалисчĕсем, Севастопольти библиотека директорĕ, çавăн пекех Казахстанри ĕçтешсем хутшăнĕç унта.

**– Уяв программинче Алексей Айхи ертсе пыракан ушкăнăн концерчĕ те пурччĕ.**

– Çапла, пирĕн библиотека Чăваш халăх поэчĕпе Геннадий Айхипе чылай вăхăт çыхăну тытнă, çавăн пекех Алексей Айхипе те хутшăну йĕркеленчĕ. Хальхинче вăл тата унăн ушкăнĕ пирĕн ятарлă хăнасем пулĕç, композиторăн произведенийĕсен концертне кăтартĕç. Тăкакăн пысăк пайне библиотека хăй çине илнĕрен билет хакĕ йӳнĕ, çакă пирĕн вулакансемшĕн тата композиторăн пултарулăхĕпе кăсăкланакансемшĕн чăн-чăн парне пулĕ.

**Надежда СМИРНОВА**

## ХАÇАТСЕНЧЕ ÇАПЛА ÇЫРНĂ

Чăвашсен тĕп библиотеки – пысăк учреждени. Ун пек библиотека пирĕн Чăваш Республикинче урăх çук. Унта – 40000 ытла кĕнеке. Библиотекăна çĕнĕ кĕнекесем туянма халĕ тата 7000 тенкĕ панă. Библиотекăна 60 журнал, 11 хаçат килсе тăрать. Чăвашлисем те пур. Библиотекăна пыракансене пăхсан, вĕренекенсем 80 процент, ыттисем – служащисем, хресченсем т.ыт.те. Библиотекăра ларакансен йышĕнче арçынсем – 93,4 процент, хĕрарăмсен йышĕ вара 6,6 процент çеç.

*«Канаш», 1926, июнĕн 24-мĕшĕ.*

…Çитĕнӳсемпе пĕрлех пирĕн библиотекăн çитменлĕхсем те пурха. Библиотекăн çурчĕ пĕчĕк тата урайĕ кĕнекесен йывăрăшне чăтаймасть. Кĕнекесене нӳрĕ тата тĕттĕм путвалта усрама тивет. Çавна май кĕнекесем час пĕтеççĕ. Вулакансем валли культурăллă канма условисем çителĕксĕр. Библиотекăна лайăх çурт тупса парасси пирки республикăри тата хулари организацисен шухăшласа пăхмалла.

*«Чăваш коммунĕ», 1940, апрелĕн 12-мĕшĕ.*

## ШӲТЛЕÇÇĔ ТЕ

Арçын вулавăша пынă.

– Эпĕ «Мĕнле майпа 1 миллион тенкĕ ĕçлесе илмелле?» кĕнеке илнĕччĕ, страницисенчен çуррине çурса илнĕ, – тет вăл.

– Çур миллион та сахал мар, – тавăрать библиотекарь.

* * *

Вулавăшра:

– Сирĕн «Чи лайăх хĕрарăм пулмалли вăрттăнлăхсем» кĕнеке пур-и?

– Фантастика литератури виççĕмĕш ретри çӳлĕк çинче.